*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЭРНЕ КУН

17 (2429) №
Хакĕ ирĕклĕ

1991 çулхи ака уйăхĕн
21-мĕшĕнче тухма тытăннă

2014,
пуш, 7

КАНУ КУНĔН КĂЛАРĂМĔ



ЯЛ-ЙЫШ | КИЛ | ХЎТЛĔХ | СЫВЛĂХ | ТĔПЕЛ

## УЯВ САЛАМĔ

**Хаклă хĕрарăмсем!**
**Сире çуркуннехи питех те илемлĕ уявпа – Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе – пĕтĕм чунтан саламлатăп!**

Эсир çут тĕнчене пурнăç пиллетĕр, шанчăкпа юрату парнелетĕр. Сирĕн аллăрсен ăшшисĕр, илĕртÿллĕ çисекен куçăрсен асамлăхĕсĕр тата ырă чĕрĕрсĕр пирĕн пурнăç пулма та пултараймасть.

Хĕрарăмсем паян хăйсен ĕçри пысăк ăсталăхне тата яваплăхне шанчăклăн çирĕплетсе тĕрлĕ тытăмра пысăк çитĕнÿсем тăваççĕ.

Кашни хĕрарăмах патшалăх пулăшăвне туйса тăма, малашлăха ырă куçпа пăхма тивĕç, çавăнпа ĕнтĕ ача амăшĕне ачалăха пулăшасси, çемье институтне çирĕплетесси Чăваш Республикин Правительствин тĕп тĕллевĕсем пулса тăраççĕ.

Нумай ачаллă çемьесем тĕрлĕ майпа укçа-тенкĕ пулăшăвĕ илсе тăраççĕ, вĕсене çурт-йĕр тума, хушма хуçалăх тытма çĕр лаптăкĕсене тÿлевсĕр уйăрса параççĕ. Чăваш Ен Раççейри шкулчченхи вĕренÿ организацийĕсенчи черете пысăк хăвăртлăхпа чакарса пыракан регионсен шутне кĕрет. Кăçал кăна республикăра 14 ача сачĕ тума палăртнă.

Патшалăхăн çавнашкал лайăх политики хăйĕн пархатарне кÿрет. 2012 тата 2013 çулсенче республикăра халăх хăй хальхĕн ÿснине шута илнĕ тата Чăваш Енре пулса иртекен улшăнусен чи лайăх хакĕ çакă!

Уяв ячĕпе сире, хаклăскерсем тата юратнăскерсем! Çывăх çыннăрсен чун-чĕри ăшшипе пулăшăвĕ сире пурнăç пăтăрмахĕсенчен шанчăклăн хÿтĕлесе тăччăр, çирĕплĕхпе ырлăх вара çирĕп çемьесем чăмартама, кĕтекен пепкесем çуратма пулăшса пыччăр!

Сире çирĕп сывлăх, чун ăшшипе çураçулăх, яланах лайăх кăмăл-туйăм, телей тата савăнăç сунатăп!

**Михаил ИГНАТЬЕВ,**
**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ.**

## Пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен – малтанхи хакпа

***Хисеплĕ вулакансем! «Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2014 çулăн II çурринчен илсе тăмашкăн нарăсăн 1-мĕшĕнчен тытăнса пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен малтанхи хаксемпе çырăнтараççĕ.***

| ÇАНТАЛĂК | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | Шупашкарта | Вăхăт | 7.03 | 8.03 | 9.03 | 10.03 | 11.03 |
| | Температура, $^0$С | 2-4 сехетре | –5 | –5 | –7 | –6 | –5 |
| | | 14-16 сехетре | –1 | +1 | +1 | +2 | +2 |
| | Юр çăвать | | – | – | – | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм. | | | 765 | 762 | 761 | 760 | 749 |

## КĔСКЕН

**Пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен министерстви республикăра пĕтĕм çĕр фончĕ 1834,5 пин гектар пулнине палăртать, вăл шутра ял хуçалăх пĕлтерĕшли 55 процент. Апла пулин те усă курман лаптăксем пур. Çавна май юлашки çулсенче çĕр хутшăнăвĕсене уçăмлатассишĕн нумай тăрăшаççĕ. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене пушă выртакан тата тухăçсăр усă куракан çĕр лаптăкĕн реестрне тума, вĕсене Пĕрлехи информаци ресурсне кĕртме сĕнÿсем хатĕрлеме хушнă.**

**Чăвашстат кăтартăвĕсем тăрăх – виçĕм çул мĕн пур харпăрлăхри хуçалăхсенче 222900 пуç măйракаллă шултра выльăх пулнă, пĕлтĕр – 207700 пуç юлнă. Ĕне 9500 пуç каталнă, сысна – 8500, качакапа сурăх – 3600 пуç.**

**Килти хуçалăхсем те выльăх шутне самай чакарнă. Мăйракаллă шултра выльăх виçĕм çул 148700 пуç (вăл шутра 86300 ĕне) шутланнă, иртнĕ çул вара – 133700 пуç (ĕне –77700). Сысна, качака, сурăх кĕтĕвĕ те чакнă.**



**ПАЯН** кун тăршшĕ 11 сехет те 09 минут. Уйăх тулса пырать. Маври кунĕнче кураксем, шăнкăрчсем, чĕкеçсем вĕçсе килеççĕ тенĕ. Кайăксем çак кунран маларах вĕçсе килни – çур ир килессе.

**ЫРАН** – Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ. Çăварниччен качча кайса ĕлкĕреймен хĕрсем туприсене тирпейлесе арчана хунă, çуркунне вĕçленессе кĕтнĕ.

**ВИÇМИНЕ** – хĕл каçакан кайăксем йăвисене майлаштарма тытăнаççĕ, кăнтăра вĕçсе кайнисем каялла таврăнаççĕ.

## ЫЙТУ – ХУРАВ

### Вăрăран çитĕнтересчĕ

**?** **Çитмĕл пилĕк çула кайрăм. Çирĕм çул каялла питомникран сакăр барбарис хунавĕ илсе карта хĕррипе лартса тухрăм. Лайăх кайрĕç вĕсем, çырлине те çисе савăнатпăр. Ял çыннисем те манашкал барбарис ÿстересшĕн, хунавне ыйтаççĕ. Темиçе çул ĕнтĕ çырла вăрринчен хунав çитĕнтерес тесе тапаланатăп. Анчах усăсăр.**

**Шкулта 35 çул ĕçленĕ хушăра эпĕ вĕренекенсемпе пĕрле темле йывăç та лартнă. Шкул картишĕнче хам вăрăран туса ÿстернĕ юмансем те пур. Ачаранах юмана килĕштеретĕп. Ĕмĕрĕ вăрăм унăн, 500 çул таран. Барбариса вара парăнтараймарăм. Чĕрĕ хÿме вырăнне пит аван вăл. Тен, эсир пулăшатăр?**

**Геннадий ИЛЬДЕНЕЕВ. Улатăр районĕ, Суйкăн ялĕ.**

Хисеплĕ Геннадий Иванович, республикăри Çут çанталăк ресурсĕсемпе экологи министерствин вăрман пуянлăхне упрас тĕлĕшпе ĕçлекен пай специалисчĕпе **Галина КУЗНЕЦОВĂПА** çыхăнтăмăр. Вăл вăрăпа аппаланса тертленме кирлĕ маррине палăртрĕ.

– Винограда вăрăран ÿстерместпĕр вĕт. Барбарис та çавнашкалах. Чи ансат меслет – **тĕме уйăрса лартни**. Тĕп тĕме чавса кăларса асăрханса темиçе пая уйăрмалла. Тымарĕ çав тери пысăк та парка пулсан алă пăчкипе те усă курма тивĕ. Барбарисăн **тымар хунавне** куçарса лартсан та 2-3 çултан чăн-чăн тĕмĕ пулса кайĕ.

Пĕр çул ÿссе хытнă туратсене те, 15-20 сантиметрлисене, çулталăкĕпех хатĕрлеме пулать. Турата çу пуçламăшĕнче касса теплицăра тымарлантармалла.

Çур пуçламăшĕнче **папка кўпчесе кайиччен каснă турат** та лайăх ÿсет. Кассанах ăна сивĕтмĕшре тытмалла, çĕр ăшăнса çитсен чавса чикмелле. Турата хĕл пуçламăшĕнче е кĕркунне кассан çуркуннечченех нÿрлĕ хăйăр хунă ещĕкре упрамалла. Туратне хăйăр ăшне тăратса чикмелле, упранакан вырăнта температура 0 градуса яхăн пулмалла.

Çуркунне çĕр типсенех **пĕр çул ÿснĕ юрăхлă турат** тупса ăна тымарлантарма 15-20 см тарăнăш чавнă канава авса хумалла, тимĕр çекĕлпе тыттарса çĕрпе витмелле, тăрри çеç курăнса тăтăр. Кĕркунне ăна, тымар янăскерне, куçарса лартмалла.

**Вăрăпа** çитĕнтересех тесен çакна шута илмелле. Лайăх пиçсе çитнĕ çырла вăрлăхне илмелле, ăна темиçе хут çумалла, йăваш марганцовка шывĕнче тытмалла, типĕтмелле. Кĕркунне тÿрех пахчана лартас тесен ăшăх (1-3 см) канав туса ăна хăйăрпа тултармалла. Вăрлăха акмалла, çиелтен 5 см хулăнăш мульчапа витмелле (пăчкă кĕрпи аванрах). Вăрлăха шăши тивесрен акнă йĕр çийĕн хыр лăссипе витмелле. Çуркунне, юр ирĕлсен, хыр лăссипе пăчкă кĕрпине илмелле, йăрана вăхăтлăха пленкăпа витмелле. Вунă вăрлăхран улттă-çиччĕшĕ шăтмаллах.

Вăрлăха çуркунне те акма юрать, анчах малтан стратификаци тумалла, урăхла каласан – вăрлăха хăйăрпа хутăштарса лайăх сăтăрмалла, унтан тăватă уйăхлăха сивĕтмĕше хумалла. Çуркуннене ăна хăйăрĕпе пĕрлех акмалла.

## ПĔЧĔК ВĂРТТĂНЛĂХСЕМ

• Вăрлăх лайăх шăтса тухтăр тесен ăна 20-30 минут марганцовка шывĕнче (100 мл шыва 0,5 г) тытмалла. Унтан юхса тăракан шыв айĕнче çуса илмелле те пĕр талăк кĕл шывĕнче (1 л вĕри шыва 2 кашăк кĕл ярса икĕ талăк тăрăлтарса лартмалла) тытмалла. Кĕл пулмасан Байкал ЭМ-1 е Фитоспорин шĕвекĕпе усă курмалла.

## ПАХЧИ-ПАХЧИ

### Турат иртесси

Сивĕсем иртсен улма-çырла йывăçĕсен турачĕсене иртме пуçлаççĕ. Çакна паппасем кўпчесе кайиччен, сывлăш температури 0 градуса çывăх чухне тумалла. Малтан улмуççи туратне касмалла. Сивĕсем таврăнсан та вăл аптрасах каймасть. Сиенленнĕ, пĕр-пĕрне кансĕрлекен, шалалла ÿсекен туратсене иртмелле.

Хĕрлĕ тата хура хурлăханăн, крыжовникăн ватăлса çитнĕ, çĕр çийĕн тăсăлакан хунавĕсене сайралатмалла. Ытлашшисене тĕпĕнченех тункатине хăвармасăр касмалла.

Сывлăш температури 3-5 градус ăшăтсан кăмпа чирĕпе кукшаран улма-çырла йывăçĕсене аммиак селитрипе тунă шĕвекпе сирпĕтмелле. Çакна валли 10 л шывра 400 г удобрени ирĕлтермелле. Йывăça сипленипе пĕрлех апатлантарма та кирлĕ ку.

Çанталăк 0 градусран ăшăрах чухне сăвăспа ытти хурт-кăпшанка пĕтерме хурлăханпа крыжовника вĕри шывпа (80 градус) мунча кĕртмелле. Паллах, лейкăпа усă курмалла.

### Калча ÿстерме

Çĕрĕ лайăх пулсан калчи те çирĕп пулĕ. Кирек мĕнле çĕре те, лавккаран туяннине те, килти пахчаран илнине те сиенсĕрлетмелле. Мĕнле майпа-ха?

**Шăнтса.** Шартлама сивĕре тăпрана 30 кунран кая мар тытаççĕ. Çапах кун пек чухне те чир пуçаракансем пурте пĕтмеççĕ.

**Вĕри шывпа пĕçертсе.** Тăпрана вĕреме кĕнĕ шывпа сапса лайăх пăтратаççĕ, тимĕр патнус çине сарса 200 градус таран хĕртнĕ духовкăна 25-30 минутлăха лартаççĕ.

**Фунгицидсемпе** (Гамаир, Алирин, Глиокладин, Фитоспорин-М, Экстросол, Планриз тата ытти те). Вăрлăх акиччен 3-5 кун маларах нÿрлентернĕ çĕре фунгицид шĕвекĕпе сапса пленкăпа витмелле. Чи тухăçлă меслетсенчен пĕри ку, çĕр микрофлори пĕтĕмпех сыхланса юлĕ.

Восток-ЭМ1, Байкал, Возрождение, Тамир препаратсемпе те усă курма юрать, анчах ун чухне нÿрлентернĕ çĕре хура пленка айĕнче 2-3 эрне таран тытмалла.

ХӲТЛĔХ ЧĂВАШ ЕН ЯЛ-ЙЫШ КИЛ СЫВЛĂХ ТĔПЕЛ

## КАМĂН МĔН ЫРАТАТЬ?

**Холестерин шайне чакарма.** Аш арманĕпе 300-шер грамм аçтăрхан мăйăрĕ, курага, иçĕм çырли, 2 лимон (вăррисĕр, анчах хуппипе) авăртмалла, 300 г пылпа хутăштармалла. Апат хыççăн пĕрер чей кашăкĕ çимелле.

**Пĕвере тасатма.** Каçпа 1 стакан шыва 1 кашăк хура тул кĕрпи ямалла. Ирпе ытлашши шыва тăкса олива çăвĕ хушса çимелле. Çакăн хыççăн икĕ сехет нимĕн те çимелле мар. Çапла 30 кунччен. Пĕр уйăх сипленнĕ хушăра ашкакай çимелле мар, пахча çимĕçĕ кăна. Пĕверпе ват çулĕсем тасалĕç, вĕтĕ чулсем тухĕç.

**Юн пусăмне йĕркелеме**. 1 стакан вĕри шыва 1 кашăк куккурус çăнăхĕ ярса пăтратмалла. Ирпе, выç варла, ĕçмелле.

**Гемоглобин шайне ӳстерме.** Фундук мăйăрне вĕтетсе пылпа (1:1) хутăштармалла. Кунне 3 хут, апат умĕн çур сехет маларах, пĕрер кашăк çимелле. Хутăша сивĕтмĕшре тытмалла.

**Сыпăсем ыратсан.** 100 мл спиртра 50-шар грамм камфора тата горчица порошокĕ ирĕлтермелле. Уйрăм савăтра виçĕ çăмарта шурри лăкаса хайхи хутăшпа пĕрлештермелле. Каçхине унпа ыратакан вырăнсене сĕрмелле.

**Гриппа** аптрасан температурăна чакарма пан улми уксусĕпе шыв (1:1) хутăштармалла, унпа çăм нускине йĕпетсе пăрмалла, урана тăхăнмалла. Лайăх витĕнсе çывăрма выртмалла. Температура хăвăртах чакĕ.

Грипп эпидемийĕ чухне организма пĕтĕмĕшле çирĕплетекен шĕвек: 350 мл кагор, 250 г пыл, 150 мл алоэ сĕткенĕ хутăштармалла. Кунне 3 хут, апат умĕн, пĕрер кашăк ĕçмелле.

## КĔСКЕН

**Иртнĕ çул пенсионерсен йышĕ – 4,4 пин çын хушăнса – 351,6 пин çынна çитнĕ. Ватлăхри ĕç пенсийĕн вăтам виçи 9,6 пин тенкĕпе танлашнă.**

**Раççей Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕ пĕлтернĕ тăрăх – Чăваш Енре пурăнакан 50 пин ытла хĕрарăм çемье капиталĕн сертификатне илнĕ. Чылайăшĕ амăшĕн укçипе пурăнмалли условисене лайăхлатнă: 21 пин çемье унпа ипотека кредитне саплаштарнă. Хальхи вăхăтра капитал виçи 429 пин те 408 тенкĕпе танлашать.**

## ЭСИР ЫЙТНĂЧЧĔ

### Шăмă сыппи канăçсăрлантарать

**?** **Хисеплĕ редакци! Сире çывхарса килекен Хĕрарăмсен уявĕ ячĕпе саламлатăп. Çирĕп сывлăхлă пулма, пысăк çитĕнӳсем тума сунатăп.**

**Нуша килнипе çыратăп. Пĕçĕ сыппи ыратнипе (коксартроз) шар куратăп. Операцисĕр тӳрлетме пулмасть терĕç. Тен, мана халăх меслечĕ пулăшĕ? 88 çулта эпĕ, ĕçпе вăрçă ветеранĕ.**

**Петр МИТРОФАНОВ. Муркаш районĕ, Отарккă.**

Хисеплĕ Петр Митрофанович! Шăмă сыппин шыççи çав тери йывăр чир. Халăх меслечĕсем чир ытла тарăна кайман – 1-2-мĕш степеньсем – чухне çеç пулăшаççĕ. Хăвăра çырса панă эмелпе сипленнипе пĕрлех çаксене туса пăхма пултаратăр, анчах малтан тухтăрпа канашламалла.

1 Купăста çулçине пылпа сĕрсе ыратакан вырăна хумалла, çиелтен полиэтиленпа тата çăм тутăрпа витмелле, çаплипех çывăрма выртмалла. Ирпе хайхи вырăна çуса илмелле. Çапла пĕр уйăх сипленмелле.

2 3 лимон, 250 г сельдерей тымарĕ, 120 г ыхра илсе аш арманĕ витĕр кăлармалла, виç литр кĕленчине ямалла. Унтан савăт туличчен вĕреме кĕнĕ шыв ярса кĕленчене хупмалла, ăшă япалапа витсе пĕр каç лартмалла. Çак шĕвеке ирсерен, выç варла, апат умĕн çур сехет маларах, 70-шер грамм ĕçмелле. Виçĕ уйăх таран сипленмелле. Пĕр кĕленче 1 уйăха çитĕ.

3 200 г явăнакан шур курăкăн (переступень белый, параличная трава) тымарне аш арманĕпе авăртмалла, 300-400 г сыснан ăш çăвне хушмалла. Йăваш çулăм çинче 5-7 минут пĕçермелле, сивĕтмелле, ыратакан сыпăсене сĕрсе выртмалла.

4 Тин вĕретнĕ 3 литр шыва хуппипех тураса вĕтетнĕ 3 лимон ямалла. Шывĕ сивĕнсен 3 кашăк пыл хушмалла. Кун тăршшĕнче чей вырăнне пĕрер стакан ĕçмелле. Çапла 1 уйăх таран.

5 2 кашăк спирт çине 2 кашăк тирек (тополь) кăчки ярса пăтратмалла, 5-7 кун тытмалла. Унтан ăна аш арманĕ витĕр кăларнă салăпа хутăштарса ыратакан вырăна сĕрмелле.

6 Шĕпĕн курăкĕн (чистотел) вĕтетнĕ çулçипе тунине 8 кашăк чухлĕ илсе аш арманĕпе авăртмалла. Ун çине 1 л олива çăвĕ ярса 2 эрне ăшă вырăнта тытмалла. Çак маçа кунне виçĕ хут сĕрмелле, ăшă япалапа чĕркемелле.

7 Типĕтнĕ хупах тымарне кофе арманĕпе вĕтетмелле, пылпа (1:1) хутăштармалла. Кунне 3 хут, выç варла, 15-шер грамм çимелле.

Апата уяса çимелле. Рационра пулă, ашкакай, сӳтĕн, тăпăрчă, турăх, шывпа пĕçернĕ пăтă пулмалла. Пылак çимĕçе, çăнăхпа пĕçернине май пур таран сахалтарах çимелле.

## ХАМА ХАМ СИПЛЕТĔП

### Çĕр улми пулăшрĕ

Хам радикулитран епле сывалнине çырса пĕлтерес килет. Анне сĕннипе хуппипех çĕр улми пĕçертĕм. Пĕрне, чи шултрине, нимĕрлерĕм, 1 кашăк тип çу тата 2-3 тумлам йод хушрăм, лайăх хутăштартăм. Унтан вĕриллех пир татăкĕ çине сĕрсе пилĕк çине хутăм, çиелтен полиэтиленпа витсе çăм тутăрпа çавăрса çыхрăм. Çаплипех çывăрма выртрăм. Ирпе компреса салтса хайхи вырăна ăшă шывпа çуса илтĕм. Виçĕ каç компресс туса выртнă хыççăн çурăм ыратма пăрахрĕ, каллех йĕркеллĕ çӳреме пуçларăм.

**Лидия ГРИГОРЬЕВА.**
**Çĕрпӳ районĕ.**

### Ӳслĕк аптратсан

**Пирĕн çемьере шăнса пăсăлсан яланах суханпа, ыхрапа тата пылпа усă кураççĕ.**

Пыр ыратсан çăвара ыхра шывĕпе чӳхемелле: 1 стакан вĕри шыва вĕтетнĕ 2 шăл ыхра ярса сехете яхăн тăрăлтармалла.

Ӳслĕк ерсен: аш арманĕпе авăртнă пуçлă сухана 1 стакан пылпа хутăштармалла, тӳрех пĕр кашăк чухлĕ çимелле. Самантран куççуль юхма, ӳсĕрттерме пуçлĕ. Кăштахран лăпланĕ. Тата тепĕр кашăк çимелле. Çапла ик-виçĕ каç çисе выртсан самай çăмăл пулнине туйса илетĕр.

Пĕрер кашăк пылпа тăвар илсе хутăштармалла, пусма татки çине сĕрсе кăкăр çине хумалла, çывăрма выртмалла. Ирпе кăкăра нӳрлĕ татăкпа сăтăрса çеç илмелле.

Тип çу, пыл, çăнăх (1:1:1) хутăштармалла, унтан ăна марля çине сĕрсе кăкăр çине хумалла, полиэтиленпа витсе ăшă япалапа çыхмалла. Виçĕ сехетрен çуса ямалла.

1 кашăк пыл, 1 кашăк тип çу, çавăн чухлех çăнăхпа типĕ горчица хутăштармалла. Çӳхе пашалу туса 2 сехетлĕхе кăкăр е çурăм çине хумалла.

**Нина СЕРГЕЕВА.**
**Вăрнар районĕ.**




Потребительский кредит

Звонок по России бесплатный
8 800 200-02-90 | www.rshb.ru
ОАО «Россельхозбанк». Генеральная лицензия Банка России № 3349. Реклама.
г. Чебоксары, Президентский б-р, 31
тел.: 8 (8352) 66-22-06

## СПЕЦИАЛИСТ КАНАШĔ

### Апат та эмел пекех

**?** **Çывăх çын шăнса пăсăлсан е грипп çаклатнипе вĕриленсе выртсан вĕтĕленетпĕр, чупкалатпăр, анчах çав вăхăтра мĕн çитермеллине пĕлместпĕр. Чирлĕ çынна мĕн çитерсен лайăхрах-ши?**

**Светлана СЕМЕНОВА.**

Сывлав çулĕсене вирус инфекцийĕ (ОРЗ) ернĕ çынна лайăх ирĕлекен углеводлă апат çитерме тăрăшмалла. Ку вăл – сĕлĕ, рис, манна пăтти, пыллă шыв, улма-çырла сĕткенĕ, кĕсел, компот, варени е лимон хушнă чей. Уйрăмах чăх шӳрпи аван, вăл çăра сурчăка кăларма пулăшать.

Чирленĕ вăхăтра хырăма кӳпĕнтерекен çимĕçе (виноград, груша) тата клетчаткăллине (чĕрĕ купăста) сахалтарах çимелле.

Рационра ытларах иммунитета çирĕплетекен витаминпа (С, А, В2, В6, D) цинклă апат-çимĕç (шăтарнă тулă, ĕне тата сысна пĕверĕ, ясмăк, çăмарта, мăйăр, тинĕс çимĕçĕсем, йĕтĕнпе хĕвел çаврăнăш тĕшши) пулмалла.

Организмри наркăмăшлă япаласене сиенсĕрлетме кунне 2-2,5 л шыв ĕçмелле.

Пылпа алоэ хутăшĕ аван. Виçĕ çултан кая мар ӳснĕ алоэ çулçине 2 талăк сивĕтмĕшре тытмалла, çумалла, сĕткенне кăларса пылпа (1:2) хутăштармалла. Сивĕтмĕшре 3-4 кун тăрăлтарса лартмалла. Кунне 3 хут, апат умĕн çур сехет маларах, пĕрер кашăк ĕçмелле.

### Пӳрешĕн мĕн усăллă?

Таса шыв – чи лайăххи. Пӳре сывă пултăр тесен кунне 1,5-2 литра яхăн шыв ĕçмелле.

Унсăр пуçне пӳре кишĕр, кавăн, хурăн сĕткенĕсене юратать. Кĕтмелпе (брусника) шур çырлин (клюква) сĕткенĕ те, шăлан (шиповник) чейĕ те сиплĕ.

Пӳрешĕн кавăн чăн-чăн эмел пекех. Вăл пӳрене тасатма, шыçса чакарма пулăшĕ.

Ытти чух пӳрешĕн усăллă çимĕçпе сиплĕ курăка – арпус, петрушка, чăраш тăрри, уртăш çимĕçĕ, хурăн кăчки – пӳре ыратнă чух асăрханса çеç усă курмалла.

Пӳре ăшша кăмăллать, шăнсанах хăй çинчен аса илтерет. Анчах нефрит чухне пӳрене ăшăтма юрамасть! Вĕри мунча кĕни, компресс туни инфекцие малалла аталанма çеç пулăшĕ.

**Ирина ИВАНОВА терапевт.**

## УСĂ КУРМА

### Иммунитета çирĕплетме



Çирĕп организма чир-чĕр вăр-вар çулăхмасть. Иммунитета çирĕплетме çакнашкал хутăш тума сĕнетпĕр: 3 лимон, 2 апельсин, 1 грейпфрут, 1 хурма илсе лайăх çумалла. Вăррине кăларса хуппи-мĕнĕпех аш арманĕпе авăртмалла. Унтан çак хутăша çуршар стакан гранат сĕткенĕпе пыл хушса пăтратмалла. Ăшăтса ĕçмелле. Малтан кунне 3 хут пĕрер кашăк ĕçмелле. Хутăша сивĕтмĕшре (холодильникра) упрамалла. Сиплев тапхăрĕ – 2-3 эрне. Çакна çулталăкра виçĕ хут – грипп вăхăтĕнче, çурпа кĕр ылмашнă тапхăрта – туса ĕçсен иммунитет çирĕп пулĕ.

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*

## КĔСКЕН

**Культура çулталăкĕ паллă кунсемпе пуян. Аристарх Орлов-Шуçăмпа Анатолий Тогаев композиторсем, Иван Ивник, Хветĕр Уяр, Аркадий Ĕçхĕл çыравçăсем çуралнăранпа 100 çул çитнине уявлăпăр. Кăçал Чăваш Енре пĕтĕмпе 72 писателĕн юбилейĕ пулĕ.**

**Чăваш Республикинче кино ăстисен пĕрлешĕвне туса хурас ыйтупа пĕрремĕш йĕркелӳ пухăвĕ иртнĕ.**

**Чăвашстат пĕлтернĕ тăрăх – пирĕн республикăра 579 пин арçын (47 процент) пурăнать. Кашни 1000 арçын пуçне 1148 хĕрарăм тивет. Çитĕннĕ арсен 63 процентĕ çемьеллĕ. Арçынсенчен чылайăшĕ 25-29 çулсенче авланать. Вăй питти ӳсĕмре пурнăçран уйрăлакан нумай (42 процент). Çут тĕнчерен вăхăтсăр уйăракан сăлтавсен шутĕнче: инкек-синкек, наркăмăшланни, аманни, юн çаврăнăш тытăмĕн чирĕ, усал шыçă, сывлав органĕсем хавшани.**

## САЛАМЛАТПĂР!



Хаклă та юратнă çыннăмăра, Патăрьел районĕнчи Пӳртлĕ ялĕнче пурăнакан **Альбина Петровна АЛБУТОВА** фельдшера, 50 çулхи юбилейĕпе чунтан саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, тӳпе пек вăрăм ĕмĕр, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, иксĕлми телей сунатпăр.



**Мăшăрĕ, ачисем,**
**аппăшĕ-йăмăкĕсем,**
**тетĕшĕпе шăллĕ,**
**юлташĕсем.**

***



Юратнă асаннене – Вăрмар районĕнчи Хуруй ялĕнче пурăнакан **Юлия Софроновна ТЕРЕНТЬЕВĂНА** – Мартăн 8-мĕшĕ яччĕпе ăшшăн саламлатпăр.

Килен тĕнче илемĕпе
Телей курса çеç эсĕ пурăн.
Ут вăрăм ĕмĕр çулĕпе,
Ху яланах çап-çамрăк курăн.

**Мăнукĕсем: Толя, Леша, Ваня, Татьяна.**

## СĔТЕЛĔР ТУЛĂХ ПУЛТĂР

### Хăймапа çăмарта хăпартни

**2 çăмарта, 25 г сĕт, 30 г хăйма, 6 г çăнăх, 10 г услам çу, 1 г тăвар.**

Эмаль савăта çăмарта, сĕт, хăйма, тăвар ярса кăпăкланиччен пăтратмалла, унтан çăнăх хушса каллех пăтратмалла. Çакăн хыççăн ăна çу сĕрнĕ çатмана ямалла, духовкăра ылтăн тĕс çапиччен пĕçермелле. Çиме лариччен çиелле услам çу хумалла.

### «Асамат кĕперĕ» салат

**Хĕрлĕ кăшман, кишĕр, хăяр, çĕр улми, пуçлă сухан, консервланă симĕс пăрça, пулă консерви, симĕс сухан е петрушка.**

Хĕрлĕ кăшмана, кишĕре, çĕр улмине хуппипе пĕçермелле, тасатса шултра теркăпа хырмалла. Тăварланă хăярпа пуçлă сухана тăваткăлласа турамалла. Турилккеваррине пулă консервине хумалла, ун тавра – хатĕрленĕ пахча çимĕçне. Çиеле майонез хумалла. Ешĕл çимĕçпе илемлетмелле. Çиме тытăниччен пурне те пĕрле пăтратмалла.

### Ишлей салачĕ

**Кăлпасси, пан улми, куккурус, пуçлă сухан, майонез, ешĕл çимĕç.**

Тĕтĕмленĕ е пĕçернĕ кăлпассине улăм пĕрчи евĕр турамалла, пуçлă суханпа пан улмине – çурма ункă пек туса, консервланă куккурус хушмалла. Пурне те пĕрле хутăштарса майонезпа пĕрле пăтратмалла. Ешĕл çимĕçпе илемлетмелле.

## ВУЛАКАН ПУЛТАРУЛĂХĔ

### Телей

*Аннене*



Телей вăл – телей.
Телейрен илемли çук,
Телейрен лайăххи çук,
Телейрен асамли çук.

Савăк пурнăçра –
Ача кулли вăл.
Ачасемшĕн вара –
Ашшĕ-амăш вăл.

Чун макăрнă чух –
Анне ăшши вăл.
Пурнăç пăрăç чух –
Ĕçчен алă вăл.

**Зоя ЮСОВА.**

## ХАЛĂХ СĂНАВĔ

✓ Çырмари пăр çине шыв тухсан часах ăшă кунсем пуçланĕç.

✓ Пуш уйăхĕн варри мĕнле – çулла та çаплах пулĕ.

✓ Пуш уйăхĕнче вăйлă çумăр çусан кăмпа нумай пулĕ.

✓ Юр çийĕ кăтрашкаллă пулни – тыр-пул лайăх пуласса, яп-яки – ăнмасса.

✓ Пуш уйăхĕнчи тумла пăрĕн варри пушă пулманни – тыр-пул ăнасса.

✓ Уйăх пуçламăшĕ ăшă та хĕвеллĕ пулсан – çур тăршшĕпех çапла тăрĕ.

✓ Пуш уйăхĕнче шыв юхмасан ака уйăхĕнче курăк ӳсмĕ.

✓ Çак уйăхра аслати авăтни – тĕш тыр ăнасса, анчах çулталăк сивĕ килессе.

*Арман чулĕ витĕр тухмасăр çăкăр çăвара кĕмест.*

*Йӳçĕ ĕçсе тутлă калаç.*

(Ваттисен сăмахĕ).

## ПĔЛЕС ТЕНĔЧЧĔ

**? Тăварлама юрăхлă хăяр сорчĕсен ятне çырсан тем пекехчĕ.**

Салат тумалли, тăварламалли, пур çĕрте те юрăхлă хăяр сорчĕсем пулаççĕ. Тăварлама юрăхли – шатрашкалли (хура е хăмăр йĕпли). Çак сортсемпе гибридсене ырлаççĕ: Анюта F1, Алфавит F1, Букет F1, Верные друзья F1, Водограй F1, Голубчик F1, Желудь F1, Зеленая волна F1, Кузнечик F1, Капелька, Конкурент, Кустовой, Крепышок F1, Коралл, Ласточка F1, Муравей F1, Моринга F1, Мальчик с пальчик F1, Малыш F1, Престиж F1, Родничок, Чемпион F1, Тополек F1, Самородок F1.

Харăсах темиçе тĕрлĕ сорт çитĕнтерме тăрăшăр. Пĕри ăнмасан та тепри çитĕнĕ.

**? Мĕншĕн шурă çăкăртан ытларах хура çăкăр хыттине ырлаççĕ?**

Çăкăр сăмсинче (уйрăмах ыраш çăкăрĕн) корниллизин текен антиоксидант пĕтĕмĕшле çăкăрĕпе илсен те 8 хут ытларах. Вăл вара пире вăхăтсăр ватăласран упрать. Апла пулсан хура çăкăр çиме юратакансем çемçе батона кăмăллакансемпе танлаштарсан ытларах пурăнаççĕ.

**? Лавр çулçи пур апатпа та каймасть пулмалла.**

Паллах, сĕтпе пĕçерекен пăтта хушаймастăн ăна. Лавр çулçи аш-какай, пулă, пахча çимĕç тата кăмпа яшкинче аван. Çĕр улмипе хатĕрленĕ апатра та лайăх.

Пăшăхланă тата пĕçернĕ пулăпа та аван вăл, кăмпапа пахча çимĕç мариначĕ валли те кирлĕ. Пельмень те тутлăрах унпа. Яшкана лавр çулçине хатĕр пуличчен 5-10 минут маларах яраççĕ, кайран ăна кăлармалла.

**? Семга тăварлама вĕренесчĕ.**

2 кашăк тăвар, 2 чей кашăкĕ сахăр, 1 чей кашăкĕ типĕтнĕ укроп, чĕптĕм хура пăрăç хутăштармалла. Унтан ăна пысăках мар татăксем туса каснă 1 кг пулă çине сапмалла, лайăх хупăнакан савăта хурса сивĕтмĕше лартмалла. Иккĕмĕш кунне пулă хатĕр те, анчах виçĕ кун тытсан вăл тата тутлăрах пулĕ.

**? Шыв сиплĕхĕ çинчен ытларах пĕлесчĕ.**

Çитĕннĕ çыннăн кунне 1-1,5 литр шыв ĕçмелле (шăрăхра – 2 л).

Чир хыççăн, çав тери хытă ывăнсан, кăмăл япăх чухне юхса тăракан лĕп шыв айне тăмалла – çын çĕнĕрен «чĕрĕлет». Урамран шăнса кĕрсен урана ăшă шыва чиксе ларни – шăнса пăсăласран хăтарĕ. Ирсерен пите сип-сивĕ шывпа çусан е пăр катăкĕпе массаж тусан сăн самантрах уçăлса кайĕ.

**«Кил», «Сывлăх», «Тĕпел» кăларăмсене Елена НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

## ЧĂВАШ НАЦИ РАДИО ПРОГРАММИ (72,41 УКВ, 105 FM хумсем çинче)

**Тунти кун, пуш уйăхĕн 10-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-7.30, 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 6.30-7.00, 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 7.30-8.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 15.30-16.00 Çĕр сум. (12+) 9.10-10.00 Женская среда. (12+) 10.30-11.00 Шурăм пуç. (12+) 11.30-12.00 Ялтан яла. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.10-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.30-18.00 Радиобиблиотека. (12+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (12+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10,10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10,15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05- 20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Ытлари кун – эрне кун**

6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00 22.00 – Хыпарсем. (12+)

8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 – Новости. (12+)

**Ытлари кун, пуш уйăхĕн 11-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Голос Республики. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30 10.10-10.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Ялтан яла. (12+) 9.30-10.00 Социальный вопрос. (12+) 10.30-11.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 11.30-12.00, 22.30-23.00 Çемье ăшши. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-14-15.00 Янра юрă! ( хид-парад). (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.10-16.30 Марафон: дни национального радио в городах и районах республики (к 5-летию Национального радио Чувашии). (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+) 17.30-18.00 Çĕр сум. (12+) 18.30-19.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 19.10-20.00 Чунлă эфир. (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (6+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Юн кун, пуш уйăхĕн 12-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Голос Республики (12+) 20.10-20.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (6+) 21.10-22.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 22.10-23.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.05, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

Профилактика 8.00-20.00

**Кĕçнерни кун, пуш уйăхĕн 13-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 8.30-9.00 Голос Республики. (12+) 22.30-23.00 Радиобиблиотека. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 14.30-15.00, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 9.10-10.00 Чунлă эфир. (12+) 10.10-11.00 Пĕччен мар. (12+) 11.10-12.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-14.30 Азы православия. (12+) 15.10-16.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 18.30-19.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 19.30-20.00 Сказочный вечер. (6+) 20.30-22.00 Çичĕ юрă. (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Эрне кун, пуш уйăхĕн 14-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Радиобиблиотека. (12+) 17.30-18.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+) 10.10-10.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.10-9.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 10.30-11.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 11.10-11.30, 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 11.30-12.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Çичĕ юрă. (12+) 15.10-16.00 Пачăшкă сăмахĕ. (12+) 16.10-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.10-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Присягая Родине. (12+) 20.10-24.00 Каçхи микс. (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Шăмат кун, пуш уйăхĕн 15-мĕшĕ**

6.05-7.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 7.05-8.00 Неформат. (12+) 8.05-8.30, 10.05-10.30, 16.05-16.30, 18.05-18.30, 19.05-19.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Радиобиблиотека. (12+) 11.05-11.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 9.05-9.30, 15.30-16.00 Социальный вопрос. (12+) 9.30-10.00 Присягая Родине. (12+) 10.30-11.00, 16.30-17.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 1 пайĕ. (12+) 15.05-15.30 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 17.30-18.00 Шурăм пуç. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Кĕрекене пуçтарăнсан. (12+) 20.05-24.00 Каçхи микс. (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.00-7.05, 8.00-8.05, 9.00-9.05,10.00-10.05, 11.00-11.05, 14.00-14.05,15.00-15.05,16.00-16.05,17.00-17.05,18.00-18.05,19.00-19.05

**Вырсарни кун, пуш уйăхĕн 16-мĕшĕ**

6.05-7.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 7.05-7.30, 9.05-9.30,18.05-18.30, 20.05-20.30 Юрă вăчăри. (12+) 7.30-8.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 8.05-8.30, 11.05-11.30, 15.05-15.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 8.30-9.00 Радиобиблиотека. (12+) 9.30-10.00 Тема дня. (12+) 10.05-11.00 Çичĕ юрă. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 2 пайĕ. (12+) 15.30-16.00 Социальный вопрос. (12+) 16.05-17.00 Шурăм пуç. (12+) 17.05-18.00 Неформат. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.05-20.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (6+) 21.05-24.00 Каçхи микс. (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.00-7.05, 8.00-8.05, 9.00-9.05,10.00-10.05, 11.00-11.05, 14.00-14.05,15.00-15.05,16.00-16.05,17.00-17.05,18.00-18.05,19.00-19.05

## КУЛĂШ, ПУЛĂШ!

– Тухтăр, манăн арăмăн сасси пĕтсе ларнă. Мĕн тумалла-ши?

– Эсир киле çур çĕр иртни виçĕ сехетре килсе пăхăр.

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**4. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 372874.

**9. Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, кирп. бой. Т. 89033583021.

**14. Станки для валяния валенок.** Т.: 89278617589, 89373810585.

**15. Кирпич, брусчатку, кольца,** ОПГС, песок, КБ. Т. 89613393363.

**16. Сетку-рабицу** от произ-ля, черную, зеленую, оцинкованную – около 100 видов, сетку сварную, **столбы,** скобы, **проволоку,** калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 89379522211.

**20. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдете дешевле – уступим. Без. вых. Т. 89625989686.

**19. Гравмассу, песок, щебень,** торф, кирп. бой. Т. 8-903-322-57-66.

**22. ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**23. Гравмассу,** песок, бой кирпича, **щебень.** Доставка. Тел. 89061355241.

**24. ГРАБЛИ, косилки, сажалки,** копалки, окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**33. Гравмассу, песок, керамзит,** щебень, торф. Доставка. Т. 89053465671.

**35. Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 89373866629.

**45. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.

